# «ХЫҪАЛТИ ПАРТА» ИНТЕРЕСЛӖ ХАҪАТ



**Паян пирӗн шкулта «Хыҫалти парта» хаҫачӗн презинтацийӗ иртрӗ. Вӑхӑтпа усӑ курса эпӗ Очикасси шкул директорӗнчен Матвеева Фаина Аркадьевнӑран интервью илтӗм.**

**— «Хыҫалти парта» хаҫат сире мӗнпе килӗшрӗ?**

— Мана ачасем хӑйсем хаҫата кӑларна пултарни самай килӗшрӗ. Вӗсен пултарулӑхӗпе савӑнма пулать ҫеҫ.

**— Ҫак хаҫата лайӑхрах аталантарас тесен пирӗн мӗн тумалла?**

— Малтанах ҫитменлӗхсене пӗтермелле. Хаҫата интереслӗ чӗлхепе ҫырмалла. Нумайтарах кӑсӑклӑ, пӗлме интереслӗ статьясем ҫырсан аван пулӗ.

**— «Районти шкул ачисен хаҫачӗ ҫамрӑксен политикине ҫутатса паракан тӗп хаҫат пулмалла», —текен шухӑшпа эсир килӗшетӗр-и?**

— Паллах, килӗшетӗп. Мӗншӗн тесен, халӗ пирӗн район радиойӗ те ҫук, ҫавӑнпа хаҫатран ҫеҫ информаци илме пултаратпӑр.

**— «Хыҫалти парта» шкул ачисен хаҫачӗ сирӗн шутпа кирлӗ-и?**

— Сирӗн хаҫат пирӗн шкул ачисене питӗ килӗшрӗ. Чӑвашла тухакан шкул ачисен хаҫачӗ питӗ кирлӗ.

**— Эсир ҫак хаҫат аталантӑр тесе пире мӗнпе пулӑшма пултарайратӑр?**

— Очӑкасси шкулӗнче ҫырӑнтару йӗркелӗп.Ачасем ҫырнӑ материалсене пуҫтарса ярса тӑрӑп. Ӑнӑҫу сире пӗр пуҫланӑ йывӑр та сӑваплӑ ӗҫе малалла тӑсма.

**Люба ВИШНЕВА,**
**Калайкасси шкулӗ,**
**10 класс**

# ҪӖНӖ ҪУЛА ЧӐТӐМСӐР КӖТЕТПӖР

Раштавӑн 29-мӗшӗнче Калайкасси шкулӗнче Ҫӗнӗ ҫул уявӗ пулать. Ҫак куна пӗтӗм шкул ачи кӗтет. Вӗсем юратнӑ учителсем, хӑйсен юлташӗсем, тӑвансем валли савӑнсах парнесем хатӗрлеҫҫӗ. Шкула Шупашкартан пукане театрӗн артистсем килеҫҫӗ. Ҫак артистсене курма пирӗн шкул ачисем анчах мар, Кадикасси садикӗнчен те, Шатракасси шкулӗнче вӗренекен ачасем те килеҫҫӗ.

Эпӗ сире Ҫӗне ҫула лайӑх иртерме сунатӑп, учителсене ан хурлантарӑр. Туссене саламлама ан манӑр!

**Анастасия ИВАНОВА,**
**Калайкасси шулӗ, 8 «Б» класс.**

**Сире валли пысӑк салам. Пӗлместӗр-и-ха! Тӗлӗнетӗр-и-ха! Ан тӗлӗнӗр, пӗтӗмпех пӗлӗр. Эпир Шурча шкулӗнче вӗренекен ачасем пурне те, пурне те Ҫӗнӗ ҫулпа саламлатпӑр. Ӑнӑҫу, телей, савӑнӑҫ, юрату сунатпӑр. Нихӑҫан та ан хуйхӑрӑр, ялан кӑмӑллӑ, ӑнӑҫлӑ пулӑр.**

# ПУЛТАРУЛЛӐ АЧА

**Пирӗн Панкли шкулӗ пысӑках мар, ачасем те сахалрах. Ҫапах та, ҫак ачасем хушшинче пултаруллӑ ачасем те палӑрса тӑраҫҫӗ.**

Ман ытларах хампа пӗрле вӗренекен тантӑшӑма Наташӑпа паллаштарас килет. Мӗншӗн тесен вӑл чӑнах та пур енчен те пултаруллӑ ача. Наташа ташлама та, юрлама та хастар. Спортра та хӑйне маттур кӑтартать, вӗренме те аван вӗренет.

**Вера Федотова,**
**Панкли шкулӗ, 8-мӗш класс**

# ЮРАТНӐ АННЕҪӖМ

Юратнӑ аннеҫӗм! Эпӗ сана ҫывхарса килекен Ҫӗнӗ ҫул ячӗпе саламлатӑп! Ҫак ҫула ҫӗнӗ ӗмӗтсемпе кӗтсе илме сӗнетӗп. Ҫитес ҫулта татах та илемлӗрех, хастартарах пулма сунатӑп, ырлӑх-сывлӑх, телей тата ӑнӑҫу сана Ҫӗнӗ ҫулта.

**Вера ФЕДОТОВА,**
**Панкли шкулӗ, 8-мӗш класс**

# МАТТУР ЭСӖ, НАСТЯ!

**Пӗрисем хӑйсен пултарулӑхне асӑрхамаҫҫӗ, хӑйсене кӑтартмаҫҫӗ, теприсем вара хӑйсен пултарулӑхне ачаран аталантараҫҫӗ. Вӗсенчен пӗри, 8-мӗш класра вӗренекен Настя Иванова. Пултаруллӑ вӑл.**

Настя спорт ӑмӑртӑвӗсене хутшӑнать, грамотӑсем ҫӗнсе илет. Вӗренӳ енӗпе малта пырать, дневниксенче «5» тата «4» анчах.

2006 ҫулта вӑл «Ҫеҫпӗл Мишши кӑвайчӗ» конкурсра ҫӗнтерӳҫӗ пулса тӑчӗ. Сӑвӑ вуласшипе пӗрремӗш вырӑна тухрӗ. Маттур, Настя!

**Таня СТЕПАНОВА, 8-мӗш класс**
**Очӑкасси шкулӗ**

# ЧӖЛХЕСЕНЕ ВӖРЕНМЕЛЛЕ

Нумай пулмасть пирӗн шкулта питӗ интереслӗ усӑ калаҫу урокӗ пулса иртрӗ. Ӑна ертсе пыраканӗ вырӑс чӗлхи учителӗ Светлана Измайловна Рожкова пулчӗ. Кунта 7-мӗш класс ачисем хӑйсене питӗ пултаруллӑ кӑтартрӗҫ. Ҫак усӑ калаҫу урокӗнче вырӑс чӗлхине аталантарас пирки, ӑна илемлӗрех тӑвас пирки сӑмах пычӗ. Тата вырӑсла мӗнле калаҫмаллине учительсем питӗ лайӑх усса пачӗҫ. Мана ҫак усӑ калаҫу урокӗ питӗ килӗшрӗ.

**Вера ФЕДОТОВА 8-мӗш класс**

**Панкли шкулӗ**

# МАНА КИЛӖШЕКЕН КРУЖОК

Шкулсенче вӗренӳре пулӑшакан кружоксем нумай. Мана килӗшекенни вара «В мире слов» кружок. Ӑна ертсе пыраканӗ Иванова Л.В. Ку кружокра эпир сӑмаха тӗрӗс ҫырма, калама вӗренетпӗр. Чӗлхери пӗр-пӗр сӑмах мӗнле чӗлхерен пулнине тӗпчетпӗр. Кружок маншӑн питӗ интереслӗ.

**Таня СТЕПАНОВА,**
**8-мӗш класс, Очӑкасси шкулӗ.**

# Ҫӗнӗ ҫул саламӗ.

***8-мӗш класра вӗренекен ачасем пурне те Сысна ҫулӗ ячӗпе саламлаҫҫӗ. Ҫирӗп сывлӑх сунаҫҫӗ. Телейлӗ пулӑр!***

**8-мӗш класс,**
**Очӑкасси шкулӗ**